**МБДОУ «Детский сад «Солнышко» ача-пăча садне çӳрекен ачасен ашшĕ-амăшĕсене «Анне чĕлхи – тăван чĕлхе» проектпа туса ирттернĕ ĕçсемпе паллаштарни**

Тăван çĕршыв аталаннăçемĕн аталанса, çĕнелсе пырать. Пурнăç улшăнса пынине шута илсе хамăн ĕçре тĕрлĕ методикăпа усă курса çĕнĕ инноваци-технологийĕсене шыраса, пĕлĕве кунран кун çĕнетсе, Федераци майĕнчи вĕренӳ стандартне (ФГОС) тата Çутăç Министерствин приказĕсене пăхăнса ĕçлеме тăрăшатăп.
Раççейре тĕрлĕ халăх пурăнать. Вĕсен кашнин хăйĕн чĕлхи пур. Пирĕн тăван чĕлхе-чăваш чĕлхи. Мĕншĕн тесен чăваш чĕлхипе пирĕн атте-анне, асатте-асаннесем, кукамайсем-кукаçисем калаçаççĕ. Вĕсем пирĕнпе мĕн пĕчĕкренпех чăвашла калаçнă, сăпка юррисем юрланă. Чăвашсем Чăваш Республикинче çеç мар, урăх регионсенче те пурăнаççĕ. Вĕсем те чăваш чĕлхине манмаççĕ, упраса хăварас тесе тăрăшаççĕ. Пирĕн чăваш чĕлхине хисеплемелле, ăна пĕтермеллемар, унпа таса калаçмалла. Тăван чĕлхене лайăх пĕлсен ытти чĕлхене те вĕренме çăмăлрах теççĕ. Тăван халăха çутта кăлараканĕ И.Я.Яковлев та «Тăван чĕлхесĕр пĕлӳ çук»,-тесе ахальтен каламан. Пĕр чĕлхе пĕр ăс, икĕ чĕлхе икĕ ăс.
Юлашки вăхăтра çамрăк ăру чăваш культурине хисеплеми тата чăваш чĕлхипе калаçми пулчĕç. «Мĕн тума кирлĕ вăл, чăваш чĕлхи?»-текенсем пур. Çакăн пек калани чуна ыраттарать, шухăша ярать.
Çавăнпа та манăн умра пысăк тĕллев: çамрăк ăрăва ăнланса, вĕсене тĕрĕс воспитани парса тăван çĕршыва, чĕлхене юратма, халăх йăла-йĕркине, упрама, ăна çĕклеме тата хӳтĕлеме пулăшакан чăн-чăн патриотсене аталантарса çитĕнтересси.
«Солнышко» ача-пăча садне виçĕ тĕрлĕ-ӳсемри ача ушкăнĕ çӳрет. Вĕсем чăвашла та вырăсла та пĕлеççĕ. Кашни ӳсĕмри программăпа тата кашни кунхи планпаусă курса ытларах чăвашла мероприятисем ирттеретпĕр. Тăван çĕршывăн иртнĕ кун çулне, йăли-йĕркисене, тĕрри-эрешĕсене авалхи тăхăмсенчен сыхланса юлнă пурнăç йĕркисене хисеплеме тата упрама ача садчĕçумĕнче пĕчĕк музей «Хĕвелпи» йĕркеленĕ. Музейра ачасене кукамăшĕсен, асламăшĕсен тĕрленĕ алшăллисем, пир-кĕпесем, кавирсем, салфеткăсем тата тĕрлĕ-эрешсем пур. Хулари музейсенче экспоната алăпа тытма юрамасть пулсан пирĕн музейра ачасен япалана алăпа тытса пăхма, урăх çĕре куçарса хума тата выляса илме те пултараççĕ. Музейра занятисенче усă курмалли литература тата экспонатсем йышлă: арча(унта ĕлĕкхи чăвашсен кĕписем, тухьясем тата тĕрлĕ эрешсем), савăт-сапа, чăваш поэчĕсен тата писателесен кĕнекисем, чăваш букварĕсем, энциклопеди, чăваш эрешĕсене сăрламалли кĕнекесем тата ытти те. Çак музейри экспонатсене пухма ачасен ашшĕ-амăшĕсем нумай пулăшрĕç.







Вĕсем пирĕн
шкулта вĕреннĕ
FOREST
BEST
FRIEND

Ача-садӗнчи ачасен чи юратнӑ экспоначӗсем вара ҫекӗлпе ҫыхса ӑсталанӑ пуканесем–Атнерпе Илемпи тата чӑваш ҫемьи (пӳрнене тӑхӑнмалли калпаксем). Ҫак пуканесем занятисем ирттерме питӗ пысӑк пулӑшу параҫҫӗ.





Ачасене мĕн пĕчĕкрен çут çанталăка, тăван çĕр-шыва, тăван кĕтесе юратма вĕрентмелле. Тăван тавралăха пуянлатасси хамăртан, пурте пĕрле тăрăшнинчен килет.



Нарăс уйăхĕ «Çăварни».



Ача садĕнчи аслă ушкăн Якавар çăлĕ умĕнче.

Тăван çĕр-шыв чечеклентĕр тесен халăхăн паха йăла-йĕркисене упраса хăвармалла, вĕсене сармалла. Çавăнпа та мĕн ачаран хамăр тăрăхри ял историйĕпе интереслентермелле, тĕпчемелле тата аса илӳсене пухмалла. Вĕсене тăван çĕр-шывăн чăн-чăн патриотчĕсем туса çитĕнтермелле. «Семицветик» аслă ушкăн ачисем ял историпе интересленеççĕ.








«Пурнăç хумĕсем», «Хум хыççăн хум» ятлă кĕнекесен авторе В.Алендей ячĕллĕ литература премийĕн лауреачĕ, краевед Анатолий Иванович  Иванов ача-садĕнче хăнара. Ачасене Анатолий Иванович хăйĕн ачалăх пурнăçĕпе, ĕлĕк хăйсем вылляса ӳснĕ вăйисемпе тата хăйĕн сăввисемпе паллаштарать.







Пурнăç илемне те эпир хамăр тăван чĕлхерен курма, туйма пуçлатпăр. Ачасадĕнчи шăпăрлансене хамăрăн тăван чĕлхе витĕр пуян та илемлĕ, тăван культурăна юратма, хисеплеме тата упрама хăнăхтаратпăр. Уяв вăхăтĕнче выляни, юрлани, ташлатни, алла-алран тытăнса çаврăнни ачасен ÿт-пĕвне

çирĕплетме, аталантарма та пулăшать. «Солнышко» ача-садĕнче те уявĕсем питĕ хаваслă иртеççĕ. Çав уявсене ытларах чăваш сăввисенпе юррисене тата ташшисене уяв сценарине кĕртме тăрăшатпăр.





Юпа уйăхĕ « Аннесен кунĕ».

Шкула хатĕрлекен ушкăн амăшĕсенпе, кукамăшĕсене тата асламăшĕсене «Анне» тата «Асаннеçĕм, асанне» ятлă юрăсенпе савăнтарчĕç.



Раштав уйăхĕ «Çĕнĕ çул». Шкула хатĕрлекен ушкăн уявра илемлĕ юрă-сăвăсемпе саламларĕç.



Нарăс уйăхĕ – Тăван çĕршыв хÿтĕлевçи кунĕ. Çакна шута илсе «Семицветик» ача-пăча садĕнче шкула хатĕрлекен ушкăн уяв ирттерчĕ. Уявт ĕллевĕ: ачасене патриотизмла воспитани парса тата ашшĕ-амăшĕсенпе тачă çыхăну тытса ĕçлесси. Ачасем ашшĕ-амăшĕсене илемлĕ юрă-сăвăсенпе саламларĕç.





Пуш уйăхĕ – «Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ».

Шкула хатĕрлекен ушкăн амăшĕсене, кукамăшĕсене, асламăшĕсене çурхи уявпа саламларĕç. Хăйсен юратнă амăшĕсене сăвăсем, юрăсем тата ташăсем ташласа савăнтарчĕç.
Кăçал пирĕн çĕршыв Аслă Отечественнăй вăрçинче çĕнтернĕренпе 75 çул çитнине уявларĕ. Аслă Çĕнтерĕве 75 çул çитнине халалласа виртуаллă конкурсем чылай иртрĕç . Вăрмар районĕнчи «Солнышко» ача сачĕн воспитанникĕсем те хăйсен воспитателĕсемпе В.Мефодьева, Л.Захарова тата Л.Васильева пулăшнипе конкурссенче хутшăнчĕç: «Çĕнтерӳ тетрачĕ» Захар Морев, Артём Николаев, Максим Фадеев, Алёша Иванов, Арсений Казанцев. Ача сачĕн педагогĕсем республика шайĕнчи «Эпир астăватпăр, эпир мухтанатпăр» конкурсра активлăх кăтартрĕç, унсăр пусне çак ĕçе воспитанниксен çемйисене те хутшăнтартăмăр.


















Аслă тата шкул умĕнхи ушкăнпа ĕçленĕ май 2019-2020-мĕш çур çулĕнче ачасемпе нумай ĕçсем пурнăçларăмăр; вĕсене çĕршыва юратма, тăванла халăха хисеплеме, тăван чĕлхене, унăн сăвви-юрри, тĕрри-эрешĕсене упраса хăварма, чăвашсен улăпла паттăрĕсен чаплă ĕçне хаклама вĕсем пек пулма тăван тăрăхра пурăнакан чыслă та паллă çынсенпе паллаштартăмăр.



«Тăван чĕлхе – анне чĕлхи» проекта кашни ўсĕмĕн программи тата кулленхи план çине кĕртсе ĕçе тата малалла тăсатпăр.